23-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942
АВГУСТ
25
ЫТЛАРИКУН
198 (6133) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕççынни депутачĕсен районсенчи совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

148. Вăрмар районĕнчи **«Атнаш» колхоз** (колхоз председателĕ **Е. М. Матвеев** юлташ). Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1942 çулти плана колхоз çакăн пек пурнăçланă: майĕпкаллă шултра выльăх тĕлĕшпе—140 процент, сыснасем тĕлĕшпе — 250 процент, сурăхсем тĕлĕшпе — 120 процент. Пăрусем тата путекесем контрактацилес тата сутăн илес плана колхоз пĕтĕмĕшпех тултарнă. «Атнаш» колхоз çулсеренех лайăх лапасем ӳстерет.

149. Вăрмар районĕнчи Çĕнĕ Мăрат ялсоветне кĕрекен **«Хĕрлĕ Мăрат» колхоз** (колхоз председателĕ **П. И. Илларионов** юлташ). Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1942 çулти плана колхоз çапла пурнăçланă: майĕпкаллă шултра выльăх тĕлĕшпе — 105 процент, сыснасем тĕлĕшпе — 110 процент, сурăхсем тĕлĕшпе—140 процент. Пăрусем тата путекесем контрактацилес плана колхоз 103 процент таран пурнăçа кĕртнĕ. 1941 çулта колхоз сурăх çăмне планра кăтартса панинчен ытла касса илнĕ. «Хĕрлĕ Мăрат» колхоз çулсеренех лайăх лапасем çитĕнтерет.

150. Вăрмар районĕнчи Аслă Чак ялсоветне кĕрекен **«Ударник» колхоз** (колхоз председателĕ **В. П. Петров** юлташ). Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1942 çулти плана колхоз çапла пурнăçланă: майĕпкаллă шултра выльăх тĕлĕшпе — 163 процент, сыснасем тĕлĕшпе — 136 процент, сурăхсем тĕлĕшпе — 130 процент. Пăрусем тата путекесем контрактацилес тата сутăн илес плана колхоз 123 процент таран пурнăça кĕртнĕ, 1942 çулшăн государствăна аш-какай, сĕт-çу тата çăмарта парас плана колхоз пĕтĕмĕшпех 1942 çулти июль уйăхĕн 30-мĕш тĕлне тултарнă. «Ударник» колхоз Хĕрлĕ Çар валли мăнтăр, лайăх лашасем панă.

151. Вăрмар районĕнчи Вознесенски ялсоветне кĕрекен **Н. Е. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **Н. И. Сорокин** юлташ). Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1942 çулти плана колхоз çакăн пек пурнăçланă: майĕпкаллă шултра выльăх тĕлĕшпе—110 процент, сыснасем тĕлĕшпе—130 процент, сурăхсем тĕлĕшпе — 112 процент. Пăрусем тата путекесем контрактацилес тата сутăн илес плана колхоз пĕтĕмĕшпех тултарнă.

Комсомолецсен лайăх пуçарăвĕ

Пирĕн хаçатăн августăн 23-мĕшĕнчи номерĕнче ВЛКСМ Чăваш Обкомĕ августăн 30-мĕшĕнче государствăна тырă парас тĕлĕшпе воскресник ирттерме йышăнни çинчен пĕлтернĕччĕ.

Саратов облаçĕнчи Терновски районри колхозсенчи комсомолецсем кăнтăрлахи ĕçрен таврăннă хыççăн тырă леçме хĕрлĕ обозсем организациленĕ, лавсемпе, автомашинăсемпе кайса элеватора тырă илнă. Зерновски районри комсомолецсем августăн 13-мĕш умĕн çĕрле хĕрлĕ обозсемпе государствăна тырă пама кайнă, çав обозсенче 20 автомашина тата 194 лав пулнă, çамрăк колхозниксем государствăна 2.068 центнер тĕштырă леçсе панă. Тырă леçме каймаликăн чылай колхозсенче комсомолецсемпе çамрăксен бригадисене тунă, çав бригадăсем кунĕн-çĕрĕн ĕçлеççĕ. Августăн 16-мĕшĕнче (вырсарникун) Саратов облаçĕнчи комсомолецсем пысăк йышлă хĕрлĕ обозсем организациленĕ. Çак кун 74 обоз янă. 1.397 лавпа тата 59 автомашинăпа кайса, государствăна 19.144 центнер тырă панă.

Пирĕн Чăваш республикинче те чылай колхозсенчи комсомолецсем хĕрлĕ обозсем организацилеççĕ. Вăрмар районĕнчи «Атнаш» колхозри комсомолецсем хĕрлĕ обоз организацилесе хатĕрлев пунктне 20 центнер ыраш леçсе панă. Çав районри «Дружба» колхозри комсомолецсем августăн 6-мĕшĕнче хĕрлĕ обозпа кайса государствăна 30 центнер тырă панă. Ялти коммунистсемпе комсомолецсем пуçарнипе республикăри хăшпĕр колхозсем обязательнăй поставка тата натуроплата енĕпе государствăна ыраш парса татрĕç. Çапла паха тырра колхозсем чи малтан государствăна параççĕ.

Государствăна тырă леçсе парас ĕçре пысăк йышлă хĕрлĕ обозсем организациленипе комсомолецсем колхозсене государствăна тырпул хăвăртрах парса татма пулăшаççĕ. Августăн 30-мĕшĕнче ирттерекен воскресника комсомолăн колхозсенчи пуçламăш организацийĕсен пурин те хутшăнас пулать. Воскресника ячĕшĕн кăна мар ирттермелле, çак кун пирĕн колхозсенчен хатĕрлев пунктĕсене тырă лавĕсем ушкăнĕ-ушкăнĕпе пырса тăччăр. Ку вара унччен, вырсарникунччен, государствăна тырă пама хăхтаса тăмаллине пĕрре пĕлтермест. Хатĕрлев пунктĕсене тырă кайса парас тĕлĕшпе кашни колхозăнах хăйне панă пилĕккунлăх заданине тултарас пулать, кашни районах тырă памалли графика тултарма кивĕçлĕ. Çавăнпа пĕрлех воскресника ирттерме те лайăх хатĕрленсе çитес пулать.

Воскресник ăнăçлăн иртĕр тесен, комсомолăн пуçламăш организацийĕсен ăна ирттерме малтанах хатĕрленсе пырас пулать. Чи малтан, комсомол организацийĕ пур кашни колхозрах комсомолецсемпе çамрăксен государствăна тырă парас ĕçе туса пыракан бригадине организацилемелле. Çак бригадăсен ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлев пункчĕсене тăтăшах леçсе парас тĕлĕшпе кунĕн-çĕрĕн ĕçлемелле.

Кашни колхозăн пĕрремĕш заповечĕ—правительство палăртнă срокра тырпулсене парса татасси. Халĕ, отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче, ялхуçалăх продукчĕсене фронт тата промышленность центрĕсем валли çителĕклĕ парас пулать. Çак ĕçе васкавлăн туни, срок çитиччĕнех пурнăçлани хаяр тăшмана хирĕç ăнăçлăн кĕрешме пыма пулăшать. Çак ĕçе ăнăçлăн туса пырасси комсомолăн колхозсенчи организацийĕсем пуçарулăха ытларах кăтартнинчен килет. Комсомолăн колхозсенчи организацийĕсем — пысăк вăй. Вĕсем тырпулсене хатĕрлев пункчĕсене леçсе парас тĕлĕшпе пысăк ĕç тума пултараççĕ. Çĕнĕ тырă итемсем çинчен тӳрех хатĕрлев пункчĕсене кайса тăтăр.

Комсомолецсемпе çамрăксен государствăна тырă леçессипе ĕçлекен бригадисем воскресника хатĕрленнĕ май тырпулсене хăвăртрах вырса пĕтерес, авăн çапас, нӳрĕ тырăсене типĕтес тĕлĕшпе вăйлăн ĕçлемелле, çав ĕçсене тунă çĕрте пример кăтартса ытти колхозниксене хастарлă ĕçлеме хавхалантарса пырас пулать. Ялти комсомолецсен уборкăри мĕнпур ĕçсене тĕрĕслесе тăрас пулать. Уборкăра машинăсем кунĕн-çĕрĕн ĕçлеччĕр. Ăçта машинăсем çитмеççĕ, унта алăпа, çапачăпа авăн çапса, государствăна пама тырă хатĕрлес ĕçе йĕркелесе ямалла. Çавăнпа пĕрлех тырă турттарма урапасене, ут-таврашĕсене йĕркелесе çитересси çине çавăрăнса пăхмалла. Тырпулсене вăхăтра вырсан, çапсан тата типĕтсен кăна воскресник ăнăçлăн иртме пултарать.

Воскресникре тырпула колхозсенчен хатĕрлев пункчĕсене предприятисен тата учрежденисен автомашинисемпе турттарма халех вĕсен руководителĕсемпе калаçса татăлмалла. Тырă турттарма уйăрнă автомашинăсемпе пултарулли усă курмалла.

Партипе совет оргăнĕсен тата общественнăй организацисен воскресника хатĕрленес тата ăнăçлăн ирттерес ĕçре комсомол организацийĕсене тивĕçлипе пулăшмалла.

Турци ССР Союзĕнчи посолĕ г-н Д. Ачикалын верительнăй грамотăсем пани

Августăн 22-мĕшĕнче СССР Верховный Совет Президиум Председателĕ М. И. Калинин юлташ Турци республикин ССР Союзĕнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй посолне Д. Ачикалын господина йышăннă, Ачикалын г-н хăйĕн верительнăй грамотисене панă.

Бельги посланникне Р. Ван де Кершов д'Аллебас господина В. М. Молотов юлташ йышăннă

Августăн 22-мĕшĕнче Ют çĕрсемпе Ĕçсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ Бельгин ССР Союзĕнчи Чрезвычайнăй посланникне тата Полномочнăй министрне Р. Ван де Кершов д'Аллебас господина йышăннă.

Комсомолецсемпе пионерсем! Тырпулсене пухса кĕнĕ чухне тăккаланчăксене хирĕç кĕрешĕр, пухса илнĕ кашни пучах—ылханлă тăшмана пемелли пуля пулса тăрать!

8 колхоз çурхи тырăсене вырса пĕтерне

ЕЛЧĔК, августăн 24-мĕш. (Телефонпа). Августăн 22-мĕш тĕлне район кĕрхипе çурхи тырăсене пухса кĕртес плана 67 процент тултарнă. Пурĕ 18.051 гектар пухса кĕртнĕ. Çурхи тырăсене вырас ĕçе «Красный восток», «Петровка», «Ново-Токаево», «Знамя», Сталин ячĕпе тăракан колхозсем—пурĕ 8 колхоз вĕçленĕ.

Тырра çанталăк пăсăличчен вырса пухас тесе, колхозниксемпе колхозницăсем ĕçе ир-ирех ,тухса тĕттĕм пуличченех ĕçлеççĕ. «Знамя» колхоз членĕ Соколов юлташ машинăпа кулленех 8 гектар вырать, нормăпа 5,5 гектар вырмалла. «Ким» колхозăн машиновечĕ Ф. Трофимов юлташ та нормăпа 5 гектар вырас вырăнне тăтăшах 7-шер гектар вырать.

Алăпа выракансем те тăрăшса ĕçлеççĕ. Крупская ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Е. Ерцова, М. Князева юлташсем ĕç нормине 175—200 процент тултараççĕ.

В. МАРКОВ,
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

ПЫСĂК ÇĔКЛЕНӲПЕ

ЧКАЛОВСКОЕ, августăн 24-мĕш **(Телефонпа).** Ĕнерхи кун тĕлне район пучахлă тырăсен 56 процентне, пурĕ 12.052 гектар вырса пухнă. Çак шутран комбайнсемпе 879 гектар, машинăсемпе 4.788 гектар вырнă, 3.828 гектар çинчи кĕлтесене капана хывнă, 1.553 гектар тыррине çапнă.

Районри чылай колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене пысăк çĕкленӳпе, хăвăрт тăваççĕ. «Красное знамя», «РОКК», «Ударник», Сталин ячĕпе тăракан колхозсенче кĕлте кӳрес, авăн çапас ĕçсем организованно пулса пыраççĕ. «Красное знамя» колхоз 112 гектар, «Ударник» — 185 гектар, Сталин ячĕпе тăракан колхоз 144 гектар тыррине çапнă. «РОКК» колхоз 301 гектар çинчи кĕлтесене кӳрсе капана хывнă. Çак колхоз членĕ Г. Клечков юлташ капан тунă çĕрте нормăна 200—300 процент тултарать.

Çурхи тырăсене Киров, Чкалов тата Ворошилов ячĕсемпе тăракан, «Ырлăх», «Красное Батырево» колхозсенче хăвăрт выраççĕ. Кзыл Чишмери «Маяк» колхозра уборка ĕçĕсене шкул ачисем вăйлăн хутшăнаççĕ.

В. КУЗЬМИН.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕнче

ВКП(б) Шупашкар райкомĕ кĕраки ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлес тĕлĕшпе августăн 24-мĕшĕнчен пуçласа фронтри пек ĕçлемелли пилĕккунлăх ирттерме палăртнă. Çакăнпа пĕрлех кĕрхи тырăсене планран ирттерсе 200 гектар акса хăварма обязательство илнĕ.

ВКП(б) Обкомĕ çак пуçарăва ырланă, кĕраки ĕçĕсене вĕçлес тĕлĕшпе августăн 25-мĕшĕнчен пуçласа республикăра фронтри пек ĕçлемелли пилĕккунлăх ирттерме йышăннă. Парти райкомĕсене çак пилĕккунлăха колхозниксене анлăн явăçтарас тĕлĕшпе мерăсем йышăнма хушнă. Çакăнпа пĕрлех тырă вырас, кĕлтесене капана хывас, авăн çапас тата государствăна тырă парас ĕçсен хăвăртлăхне чакармалла марри çинчен те асăрхаттарнă.

Тăккаланчăка хирĕç кĕрешес ĕçе хакламан çĕрте

ИĔПРЕÇ, августăн 24-мĕш. **(Телефонпа).** Вăйлă тырпула пĕр тăккаламасăр пухса кĕртни тăван çĕршыва тĕреклетет, нимĕç захватчикĕсене хăвăртрах çĕнтерме пулăшать. Çакна «Победа» колхозра тĕрĕс ăнланса илнĕ. Унта тырпул тăккаланнине хирĕç кĕрешме шкул ачисенчен 3 отряд организациленĕ. Уйрăмах учительница М. Никитина ертсе пыракан отряд лайăх ĕçлет. Отрядри 34 ача 3 кун хушшинчех 7 гектар çинчен 18 пăт пучах пухнă. Ытти отрядсем те начар мар ĕçлеççĕ.

Колхозăн çурхи тырăсем 407 гектар çинчен пухса кĕртмелле. Шкул ачисем кашни гектар çинчен 40-шер килограмм тырă пухса илсен те, колхоза валли 1.000 пăта яхăн тырă сыхласа хăвараççĕ.

«Ударник» колхозри шкул ачисен отрячĕ те (руководителĕ Брагин юлташ) кĕске вăхăт хушшинчех 17—18 пăт пучах пухрĕ.

Анчах ку ĕçе пур çĕрте те ăнлă пек туса пымаççĕ-ха.

Тĕрĕслесе пăхнă хыççăн, «Красный Октябрь», «Путиловец», Сталин ячĕпе тăракан колхозсенче тырра тăккаласа вырнине палăртнă. «Красный Октябрь» колхозра вырса пухнă кашни гектар çинче ыраш пучахĕсем 77-шер килограмм, тулă пучахĕсем 44-шер килограмм тăкăнса юлнă. Сталин ячĕпе тăракан колхозăн вăрман хĕрринчи пĕр участокĕ çинче алăпа выракансем, курăклă тесе, тыррăн пучахĕсене çеç татса пухнă, аванăн пучахсем çĕр çумне выртса юлнă. Апла пулсан та, колхозсенче пучахсене пухас ĕçе организацилемен. «Осоавиахим» колхозра кĕлтесене шăтăк хуплă урапасемпе кӳреççĕ, çавăнпа кашни хутламассерен вăтам шутпа 1—1,5 килограмм тырă тăкса хăвараççĕ.

Жнейкăсем çумне зерноуловительсем туса çакман пирки тырпул чылай колхозсенче тăкăнса юлнă. Райçĕрĕç пайĕ пĕлтернĕ тăрăх, жнейкăсем çумне зерноуловительсем тумасăр пирки çуртырисене вырнă чухне çеç район 13.000 пăт тырă çухатса хăварать. Райçĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем çакна пĕлсе тăраççĕ пулин те, кашни жнейка çумнех зерноуловитель туса çакас ыйтăва колхозсен руководителĕсем умне çивĕччĕн лартман-ха. Çавăнпа жнейкăсем чылайĕшĕ халĕ те зерноуловительсемсĕрех ĕçлеççĕ.

Вăрçăн хаяр кунĕсенче тырпула тăккаласа хăварни — çĕршыв умĕнче айăпа кĕнипе пĕрех. Анчах райçĕрĕç пайĕпе колхозсен руководителĕсем тата ялсовет исполкомĕсен председателĕсем тăккаланчăка хирĕç кĕрешес ĕçе тивĕçлипе хакламаççĕ-ха.

Дм. МИХАЙЛОВ.

Ялсовет исполкомĕ тăккаланчăка хирĕç кĕрешет

ВАРНАР. Кĕçĕн Кипек ялсоветĕнчи «Память Ленина» колхозри Д. Игнатьев юлташ ертсе пыракан иккĕмĕш бригада вырнă 14 гектар лаптăк çинче кашни тăваткăл метртах 10—12-шер пучах тăкăнса юлнă пулнă. Вĕсене пухас ĕçе çийĕнчех организацилемен. Çапла вара, ку бригада сахалтан та 850 килограмм тырра çире тăкса хăварма пултарнă.

Çак ыйтăва ялсовет исполкомĕн ларăвĕнче, колхозниксен пухăвĕнче тĕплĕн сӳтсе-явнă. Кун хыççăн колхозра тăккаланчăка хирĕç кĕрешес ĕç вăйланчĕ. Халĕ пур бригадăсенче те пучахсене кĕреплесемпе пухас ĕçе организациленĕ. Ку ĕçре уйрăмăнах шкул ачисем пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Р. Артемьева, Т. Якимова, А. Тарасов учительсем ертсе пыракан звеносем пучах пухас тĕлĕшпе лайăх ĕçлеççĕ. Тăккаланчăка хирĕç кĕрешнине пула, колхоз 261 гектар çинчен 39.150 килограмм тырă сыхласа хăварнă. Шкул ачисем çак паха ĕçе çуртыррисене вырнă чухне те тимлĕн туса пыраççĕ.

С. СЕЛЕЗНЕВ.

Сеялкăсемпе туллин усă кураççĕ

ЕЛЧĔК. **(Телефонпа).** Августăн 22-мĕш тĕлне район кĕрхи тырăсене 7.643 гектар çине акса плана 56 процент тултарнă. «Красный восток», «Мало Байдеряково», «Петровка», «Ново-Токаево», Сталин ячĕпе тăракан колхозсем кĕрхи тырăсене акса пĕтернĕ.

Кĕраканче сеялкăсене май килнĕ таранах ĕçлеттерме тăрăшаççĕ. Ленин ячĕпе тăракан тата «Осоавиахим» колхозсенче кĕртыррисене пĕтĕмпех сеялкăсемпе акаççĕ. Крупская ячĕпе тăракан колхозри сеяльщик Петроградский юлташ 12 ретлĕ сеялкăпа кашни кун 8-шар гектар акать, ĕç нормине 125 процент тултарать. И. Арепьев юлташ та сеялкăпа 3,5 гектар акмалла пулсан, кулленех 5-шер гектар акать.

Кĕрхи тырăсене планран ирттерсе акас тĕлĕшпе çĕршывра пуçланнă движени районри колхозсенче анлăн сарăлса пырать. Тула облаçĕнчи «Заря» ялхуçалăх артелĕн членĕсем чĕнсе калланине сӳтсе-явнă хыççăн кĕрхи тырăсем акмалли лаптăка Ленин ячĕпе тăракан, «Коммунист» колхозсем 80-шар гектар, Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз 70 гектар, «Сатури», «Автогигант» колхозсем 60-шар гектар чухлĕ пысăклатрĕç.

КĔРХИ ТЫРĂСЕНЕ ВĂХĂТРА АКМАЛЛА

ОКТЯБРЬСКОЕ, августăн 24-мĕш. **(Телефонпа).** Çитес çул вăйлă тухăçлă тырпул туса илес тесен, кĕрхи тырăсене вăхăтра акса хăвармалла. Халĕ ĕнтĕ кĕртыррисене акмасăр пĕр кун юлни те сиенлĕ, мĕншĕн тесен кая юлса акнă тырăсен калчисем кĕркуннехи сивĕсем çитиччен ӳссе çирĕпленеймеççĕ, шăнса пăсăлаççĕ. Анчах районри колхозсенче кĕртыррисене акас ĕç питех те кая юлса пырать. Районăн планпа кĕртыррисем пурĕ 10.410 гектар акмалла пулсан, августăн 23-мĕш тĕлне 4.333 гектар çеç акнă.

Кĕраки юлса пыни чи малтанах ку ĕçре сеялкăсемпе туллин усă курманнинчен, ĕçе тĕрĕс организацилеменнинчен килет. «Дружба», «Новая жизнь», «Осоавиахим» колхозсенче 11 ретлĕ сеялкăпа куллен 5—6-шар гектар çеç акаççĕ, нормăпа 11-шер гектар акмалла. «Путь коммунизма» колхоз членĕсем акма кая юлса тухаççĕ, каç пуличченех ĕçрен таврăнаççĕ. Çавăнпа ĕç нормине тултараймаççĕ.

Кĕракинчи çитменлĕхсене хăвăрт пĕтермелле, кĕртыррисене вăхăтра акса хăвармалла.

П. ПОРТНОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Августăн 23-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Августăн 23-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç **Клетскаяран** кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри, **Котельниковăран** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри, **Пятигорскран** кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри тата **Краснодартан** кăнтăрарахри районсенче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Иртнĕ эрнере августăн 16-мĕшпе 22-мĕш хушшинче сывлăшри çапăçусенче противникăн аэродромĕсем çинче тата зенитнăй артиллерирен персе нимĕçсен 347 самолетне пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинче пирĕн 194 самолет пĕтнĕ.

* * *

Августăн 22-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 30 çити танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 200 ытла автомашинине, боеприпассем тиенĕ 30 çити лавне, 4 бензозаправщикне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, полевой тата зенитнăй артиллерин 10 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 3 складне тата горючи усракан 2 складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине 2 батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Клетская районĕнче пирĕн войскăсем активлă çапăçусем туса пынă тата хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Н-ски чаçри гвардеецсем халăх пурăнакан темиçе пунктран нимĕçсене хĕссе кăларнă. Нимĕçсен 11 танкне, 20 автомашинине пĕтерсе тăкнă тата пăшалсемпе пулеметсенчен персе противникăн 4 самолетне ӳкернĕ. Клетскаяран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри районра Дон урлă каçмалли вырăнсемшĕн хаяр çапăçусем пынă. Пĕр участокра противник юханшыв урлă хăйĕн войскисемпе танкĕсене каçарма пултарнă. Пирĕн войскăсем противникăн çав группине хирĕç хаяр çапăçусем туса пыраççĕ. Тепĕр участокра итальянецсен «Челере» ятлă дивизине хирĕç хаяр çапăçусем пыраççĕ. Пирĕн пехотăпа танксем Гитлерăн таркисене вăйлăн пырса çапса çав дивизин составне çурринчен кая мар вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе пехотин пысăк вăйĕсене хирĕç хĕрӳллĕ çапăçусем туса пынă. Уйрăм участоксенче нимĕçсем питĕ пысăк çухатусем тӳссе малалла куçма пултарнă. Н-ски чаçăн позицийĕсем çине нимĕçсен пехотин икĕ полкĕ тата 70 çити танкĕ наступлени туса пынă. Пирĕн боецсем тăшмана артиллерирен персе кĕтсе илнĕ, темиçе çĕр гитлеровеца тата 16 танка пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра танксене хирĕç пемелли пăшалсен подразделенийĕ нимĕçсен 8 танкне стройран кăларнă. Сывлăшран тапăннинчен сыхланакан Н-ски полкăн зенитчикĕсем 6 кун хушшинче нимĕçсен 12 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Краснодартан кăнтăртарахри районра противника хирĕç хаяр çапăçусем туса пынă. Н-ски соединенири боецсем нимĕçсен вăйлă атакине сирсе пăрахнă тата тăшмана чылай пысăк çухатусем кӳнĕ. Çапăçу хирне нимĕçсен 4 çĕмрĕк танкĕ выртса юлнă, тăшманăн 15 автомашинине пĕтерсе тăкнă тата 200 çити гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ.

Пятигорскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри вырăнта пирĕн чаçсем противникăн танкĕсемпе мотопехотине хирĕç оборонăллă çапăçусем туса пынă.

* * *

Волхов фронтĕнче противникăн пысăках мар групписемпе тытăçусем пулса иртнĕ. Пĕр участокра кĕçĕн лейтенант Торин ертсе пыракан боецсен пысăках мар ушкăнĕ хăвăрт тата хăватлăн пырса çапса нимĕçсен çирĕплетнĕ рубежне тытса илнĕ. Противник хаяр контратака пуçланă. Пирĕн боецсем нимĕçсен çав контратакине сирсе пăрахнă. Лейтенант Узин ертсе пынипе пирĕн разведчиксем противник тăракан вырăна кĕрсе кайнă та нимĕçсен блиндажĕсене гранатăсем вăркăнтарса 17 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ. Разведчиксем икĕ ручной пулемет, темиçе винтовка тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Ленинград облаçĕнчи партизансен У. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ нимĕçсен гарнизонĕ çине тапăннă. Нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене 85 çынна вĕлерсе пĕтернĕ. Партизансем 6 пулемет, 2 автомат тата винтовкăсемпе патронсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен сыхăну самолечĕн летчикĕ ефрейтор Альвин Гойбер, тыткăна лекнĕскер, çапла каласа панă: «Хĕвелтухăç фронтне килсе çитни пĕр уйăха яхăн çеç. Çак кунсенче сывлăшри çапăçура вырăссем манăн самолета персе ӳкерчĕç те эпĕ тыткăна парăнтăм. Эпĕ Польшăра та, Голландире, Данире, Норвегире, Чехире тата ытти çĕршывсенче те пулса курнă. Пур çĕрте те, Австрире те пулин нимĕçсене кураймаççĕ. Фронта тухса килнĕ чухне çул майĕпе эпĕ темиçе кун хушши Берлинра пурăнтăм. Нумаях пулмасть унта çăкăр памалли нормăна каллех чакарнă. Халĕ ĕнтĕ Берлинра пурăнакан çын кунне 200-шер грамм çеç çăкăр еврĕлĕ ялала илет».

* * *

Серби районĕнче (Греция) грек патриочĕсен отрячĕ концентрациллĕ лагерь çине тапăннă. Партизансем 18 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ те 200 ытла грека ирĕке кăларнă, çав грексене нимĕçсем Германие ĕçлеме илсе каяс тесе лагере хăваласа пухнă пулнă.

Августăн 24-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Августăн 24-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç **Клетскаяран** кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри, **Котельниковăран** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри Пятигорскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри, **Краснодартан** кăнтăртарахри районсенче çапăçусем туса пынă.

Ытти участоксенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

* * *

Клетская районĕнче Н-ски подразделенин боецĕсем çĕрле противник вырнаçса тăнă çĕре кĕрсе кайнă. Штыксемпе чиксе тата гранатăсем ывăтса вĕсем 100 гитлеровеца ытла вĕлерсе пĕтернĕ, радиостанцие, броневика тата 6 автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Клетскаяран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн чаçсем Дон шывĕн сулахай енне каçнă фашистла войскăсене хирĕç хаяр çапăçусем туса пынă.

* * *

Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра противник пĕр участокра нумай танксем пухса тăратса пирĕн оборонăн малти линине татса кĕнĕ. Пирĕн войскăсем противникăн çав группировкине хирĕç хаяр çапăçусем туса пынă. Танксен пĕр подразделенийĕ тăшмана флангран пырса çапнă та нимĕçсен 7 танкне тата 200 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Халăх пурăнакан пункт патĕнчи çапăçусенче пирĕн пехота чаçĕ çумынсен пехотин батальонне çĕмĕрсе тăкнă.

* * *

Краснодартан кăнтăртарахри районра пирĕн чаçсем противникăн танкĕсемпе пехотине хирĕç оборонăллă çапăçусем туса пынă. Н-ски чаçăн разведчикĕсем çĕрле халăх пурăнакан пункт патĕнче нимĕçсен танкĕсем, автомашинисем тата лавĕсем нумай пухăнса тăнине палăртнă. Пирĕн артиллерирен персе противникăн танкĕсемпе мотопехотине сапаласа янă. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 150 çынна ытла, 8 танка, 30 автомашинăна тата боеприпассем тиенĕ 15 лава пĕтерсе тăкнă.

Пятигорскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри участоксенчен пĕринче вăйлăн çапăçнă хыççăн пирĕн чаçсем оборона тумалли çĕнĕ рубеж патне чакнă.

Вĕçĕ 2-мĕш страницăра

Совет Информаци Бюровĕнчен

Августăн 24-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕ вĕçĕ

Сурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн авиаци аэродромсене çĕмĕрнĕ. Пирĕн бомбардировщиксем, Лях тата Струговски юлташсем ертсе пынипе, противникăн аэродромĕ çине кайса тапăннă. Бомбардировщиксем 3 самолетне пĕтерсе пăрахнă. Старши лейтенант Олейников ертсе пыракан 6 штурмовик тăшманăн тепĕр аэродромĕ çинче «Юнкерс-52» йышши 10 самолета пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçура нимĕçсен «Мессершмитт-109» йышши пĕр самолетне персе ÿкернĕ. Пирĕн авиаци çухатусăр пулнă.

* * *

Карелсен фронтĕнче П. юлташ командир пулса ертсе пыракан «Полярник» ятлă партизансен отрячĕ чугунçул çине тапăннă. Партизансем боеприпассен 3 складне тата [illegible] сирпĕнтерсе янă. Июлĕн 19-мĕшĕнче гитлеровецсем вĕсен Финляндири тарçисем çĕнĕрен туса лартнă 70 метр вăрăмăш кĕпере [illegible]. Июлĕн 20-мĕш ирĕн [illegible] «Полярник» отрядри партизансем [illegible]. Темиçе кун иртсен çак отрядри партизансем чугунçул çинче эшелона йăтăнтарнă, [illegible] салтакĕсене офицерĕсене 78 çынна вĕлернĕ.

* * *

Итали салтакĕ Энрико Каллюочо хăйĕн тăванĕсем патне Милана ярса янă çырăвне тытса илнĕ. Çырура çапла каланă: «Мана питех те ывăнтарчĕ. Кунта темĕн те хăрушă ĕç пулса иртет. Эпĕ кунтан тăтăлса тухса [illegible]. Пирĕн полк нумаях пулмасть çапăçа кĕрсе, анчах пирĕн салтаксен çурри [illegible] сайралантăр. Кашни кунах [illegible]. Пирĕн çине [illegible] 200 çын [illegible]. Фелиçе, Пьетро, Викторио тата ыттисем те вилчĕç. [illegible] Россейăна [illegible]».

* * *

Калинин облаçĕнчи Рабочий ялĕнче нимĕçсем фашистла мерзавецĕсем Иван Лотов колхозника [illegible]. Арина Стороженова тата Татьяна Смирнова колхозницăсене Иван Лотова [illegible]. Гитлерла бандитсем çак хĕрарăмсене тытнă та çакса вĕлернĕ.

* * *

Норвегире Германи çарĕ валли продукци хатĕрлекен предприятисенче работниксен массăллăн тарни палăрать. Сурçĕр Норвеги çар объекчĕсем тунă çĕрте ĕçлекен 500 рабочи тухса тарса пытаннă. Норвежецсем нумайĕшĕ вăрмансене тарнă та унта оккупантсене хирĕç [illegible].

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

Самоподавательлĕ молотилка

Зуевăри МТС-ĕн паха опычĕ

Зуевăри МТС иртнĕ çулта пысăк молотилка çумне самоподаватель лартса çапнă. Çакна тунипе молотилка патĕнче ĕçлекенсен йышне 5—8 çын чакарма, пĕр сехетре 0,26 тонна ытларах тыра çапса кăларма тата пĕр тонна тыра çапма 1,5 килограмм горючи перекетлеме пулчĕ. Халĕ, вырăн вăхăтĕнчи условисене, Зуевăри МТС опытне пур çĕрте те анлăн сарас пулать.

Самоподавателе МТС мастерскойĕнче тата колхозăн тимĕрç лаççинче кирек хăшĕнче те тума пулать. Унăн хăма çапса тунă тăвата кĕтеслĕ лапток тĕпĕ [illegible] приемникĕ пур, приемникĕн лапткĕ тĕпне икĕ чĕне йывăç планкăсем çапса тунă транспортера вырнаçтарнă.

Приемник рамисен [illegible] çине икĕ шăвакан подшипник хушшине приемник валне вырнаçтарнă. Ун çине икĕ шкив вырнаçтарса лартассĕ: шкивсем—пĕри 250 миллиметр хулăнăш, тепри 180 миллиметр хулăнăш.

Привод валĕн тĕнĕлĕнчен 103 сантиметра çÿлерех икĕ шăвакан подшипник хушшине пысăк вала вырнаçтарса лартассĕ.

Пысăк вал çине икке уйăрлакан пĕчĕк йывăç валсем винтласа [illegible] лартассĕ. Пĕчĕк валсен пуçĕсене, вĕсене уйăрласа кайма парас мар тесе, [illegible] çирĕплетессĕ. Приемника кĕлтесем яракан вырăна вырнаçтарассĕ [illegible] молотилкăн çÿлти швеллерĕсем çумне [illegible] çирĕплетсе хурассĕ. Транспортерлă чалăш площадкине [illegible].

Транспортерăн планкисене чĕнĕсем патне пĕр-пĕринчен 30 сантиметр хушши уйăрса çапса çыхăнтарассĕ. Транспортер кĕлтесене туртса пырассине чалăш площадкăн рамисем тăрăх тунă хăмасен [illegible] подшипниксем вырнаçтарма [illegible].

Приемник приводне валне ĕçлеттерме молотилка барабанĕн валĕнчен чĕнпе хĕреслĕ кăкарасçĕ.

Инженер В. ГОЛОВНЫХ.

Комбайн моторсăр ĕçлет

Рязань облаçĕнчи Мерзино МТС-ĕн комбайнерĕ Томилов юлташ «Коммунар» комбайна моторсăр ĕçлеттерме [illegible]. «Коммунар» комбайна моторĕ бензинпа ĕçлеме пулсан, халĕ вара горючи перекетленет. Томилов сĕнĕвне çав облăçри Шелуховски, Добровски тата Ряжски МТС-сенче пурнăçа кĕртнĕ. Моторсăр комбайнсем аван ĕçлеççĕ.

Комбайна моторсăр ĕçлеттернĕ чух «СТЗ-НАТИ» трактор моторĕн валĕнчен [illegible]. СССР Наркомземĕн агротехникăн механизаци управленийĕн главнăй инженерĕ Л. Корбут каланă тăрăх, ку майпа комбайна ĕçлеттерме «СТЗ» тракторăн юрăхсăра тухнă пайĕсемпе: передача коробкипе, çÿлти валпа тата шкивпа çыхăнтаракан передача коробкипе усă кураççĕ.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту

Стахановла коллектив

ÇĔМĔРЛЕ, августăн 24-мĕш. (Телефонпа, хамăр корр.). «Большевик» заводри механически цех коллективĕ виçĕ уйăх каялла плана 150 процентран кая мар тултарма, продукци пахалăхне лайăхлатма пулса обязательство илнĕччĕ. Коллектив çак обязательствăсене уйăхран уйăха ытлашшипех пурнăçласа пырать. Июль уйăхĕнчи производство планне 220 процент тултарчĕ. Цехри рабочисенчен пурте задание 150 процент ытла тултараççĕ. Двухсотниксемпе трехсотниксен хисепĕ çурри ытла шутланать. Токарь И. Баранов юлташ июльри задание 271 процент, А. Романов — 249 процент, электросварщик Кудышкин тата И. Александров юлташсем 243-шер процент тултарнă. Вĕсен август уйăхĕн малтанхи çурринчи ĕç тухăçлăхĕ те çавăнтан кая мар. Паллă тимĕрçĕ А. Закалябин, слесарь С. Моторин юлташсем нормăна вăтамран 270 процент тултарса ĕçлеççĕ, васкавлă заказсене пурнăçланă кунсенче 400 процента çитереççĕ.

Цехри бригадăсенчен платниксен Красиков юлташ ертсе пыракан бригадин ĕç тухăçлăхĕ пысăк. Бригада июльри задание 244 процент тултарнă халĕ те çавăн пек хăвăртлăхсемпе ĕçлет.

БРАКСЕМ ПУЛМАН

СĔНТĔРВĂРРИ. Судоверфь коллективĕ вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек ĕçлет. Коллектив 7 уйăхри производство планне ытлашшипех тултарчĕ, продукцин хăйне ларакан хакне 28 процент чухлĕ чакарчĕ. Ĕç тухăçлăхĕ уйăхран уйăха ÿссе пырать, июль уйăхĕнче вăл 143 процента çитрĕ. Уйрăмах стахановецсен ĕç тухăçлăхĕ пысăк. Платниксенчен А. Белов, Л. Староверов, Н. Борзов, Г. Сивов, П. Воинов юлташсем нормăна икĕ хут ытла ирттерсе тултараççĕ, В. тата Г. Хлебниковсем, К. Марков, Миловидов, Алексеев, Ермолаев, Куприянов тата Иванов юлташсем вăтамран 170 процент тултараççĕ. Ф. Краличкин тимĕрçĕн ĕç тухăçлăхĕ те вĕсенпе танлашать. Çакăн пек стахановецсен хисепĕ 66 çынна çитет.

Пирĕн инженерсемпе мастерсем производствăна çĕнĕлле организациленин примерне кăтартаççĕ. Главнăй инженер П. Колчин, техникăллă контроль отделĕн начальникĕ Н. Шевнин юлташсем заданирен нумайрах тата техникăллă условисенчен аванрах продукци туса кăларассишĕн кĕрешеççĕ. Пирĕн продукцие заказчиксем браклани пулман.

П. ЖИЛОЧКИН,
Судоверфь директорĕ.

Вăрман ĕçĕнчи стахановецсем

ЙĔПРЕÇ. Чугунçул валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе Буинскри вăрман заводĕнче темиçе районран пынă колхозниксем ĕçлеççĕ. Тăвай районĕнчен пынă колхозниксем (уполномоченнăйĕ Афанасьев юлташ) уйрăмах лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вĕсем пурте нормăна тултараççĕ, хăшĕсем 200 процента çитереççĕ. Василий Владимиров, Николай Кириллов («Ким» колхозран), Михаил Егоров, Мария Сергеева (Молотов ячĕпе тăракан колхозран) колхозниксем вутă турттарас нормăна кулленех 2 хут ытла ирттерсе тултараççĕ. Çапла ĕçлесе вĕсем август уйăхĕнчи задание 14 кун хушшинчех пурнăçланă.

И. МИТЯСЬ.

Ют çĕршывсенче

„Эпир текех кĕтсе тăма пултараймастпăр"

АНГЛИРИ ПРОФСОЮЗСЕМПЕ ОБЩЕСТВАЛЛА ОРГАНИЗАЦИСЕМ ИККĔМĔШ ФРОНТ УÇМА ЫЙТАÇÇĔ

ЛОНДОН, августăн 22-мĕш. (ТАСС). Иккĕмĕш фронт уçас лозунгпа конференцисем тата митингсем çаплах пулса пыраççĕ. Тĕрлĕ организацисем премьер-министр патне çырусемпе телеграммăсем яраççĕ. Çав çырусемпе телеграммăсенче вĕсем Европа континентĕнче халех наступлени тăвассине организацилӗме чĕнеççĕ. Англи салтакĕсен арăмĕсемпе тăванĕсем, Бирмингам хулинче пурăнакансем, Черчилль патне çыру янă, çав çырура вĕсем: иккĕмĕш фронта уçассине мĕн чухлĕ каярах хăварса пыраççĕ, пирĕн çемьесем, пирĕн паттăр союзниксем-вырăссем тÿсекен жертвăсем çавăн чухлĕ ÿссе пынине эпир халĕ пĕлетпĕр ĕнтĕ. Эпир текех кĕтсе тăма пултараймастпăр. Çĕнтерÿ тăвас çулпа кайма чăрмантарма хăтланакан çынсене ним хĕрхенмесĕр пусарса пыма чĕнетпĕр. Мистер Черчилль, иккĕмĕш фронт тăвăр, вара сире пĕтĕм Англи пулăшса тăрĕ».

„Иккĕмĕш фронта халех уçни çĕнтерĕве хăвăртлатать"

АМЕРИКĂРИ АДВОКАТСЕН ОРГАНИЗАЦИЙĔ РУЗВЕЛЬТ ПАТНЕ ЯНĂ ТЕЛЕГРАММА

НЬЮ-ЙОРК, августăн 22-мĕш. (ТАСС). «Национальная гильдия адвокатов» ятлă организацин исполнительнăй комитечĕ Рузвельт патне телеграмма янă. Çав телеграммăра вăл Европăра халех иккĕмĕш фронт туса хума чĕнет. Çав телеграммăра çапла каланă: «иккĕмĕш фронта уçни мĕнле жертвăсем ыйтнине эпир пĕтĕмĕшпех ăнланса тăратпăр, анчах хуллен ĕçлесе пыни наступлени тунинчен нумай хăрушăрах пулнине те эпир ĕненсе тăратпăр».

„Эпир çапăçас тесе çар ретне тăнă"

Америкăри çар хаçатĕнче тухнă статья

НЬЮ-ЙОРК, августăн 21-мĕш. (ТАСС). Америка çар хаçачĕсенче пичетленекен нумай çырусем çакăн çинчен калаççĕ: Америка çарĕн салтакĕсем гитлерла Германие хирĕç наступлени туса пырас вăхăт çитессине чунтан кĕтеççĕ. Америка çар çыннисем кăларакан «Янк» хаçат, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен çар лагерĕсенче нумай сарăлнăскер, «Кам пĕлме тивĕçлĕ, çавсене пурне те» ятлă умстатьяра çапла çырать:

«Хăçан эпир çапăçатпăр?» текен ыйтăва пама вăхăт çитрĕ тесе шутлатпăр эпир. Эпир, салтаксем, çак ыйту çине ответ кĕтсе, çав ответа халиччен те илмесĕр, темиçе уйăх хушши ĕнтĕ ним тумасăр пурăнатпăр. Çав вăхăтрах тĕнчене сиенлекен сурансем тарăнлансах пыраççĕ. Эпир хамăр çĕршывăн шанчăклă салтакĕсем пулса тăратпăр. Пирĕн пурин те—пĕр шухăш тата пĕр тĕллев. Производствăна аталантарса вăрçăра çĕнтерме пулать тенине эпир илтнĕ. Производствăра ĕçсем пирĕн пур енĕпе те лайăх пулса пыраççĕ. Пире, паллах, вăрçăра çĕнтерме самолетсем, тупăсем тата транспорт кирлĕ. Фронтсем уçма мĕн тери йывăрринe эпир пĕлетпĕр, анчах çавăн пекех эпир вăрçăра çапăçас тесе çар ретне тăнине те пĕлетпĕр. Эпир кĕтнĕ тата кĕтетпĕр.

Тинĕс-çар пехоти Соломон утравĕсем çинче противника малтанхи хут çапрĕ ĕнтĕ. Пирĕн флот тĕнчен пур пайĕсенче те тĕнĕл держависене пырса çапрĕ. Пирĕн авиаци тăшманăн хăшпĕр çар укреплениййĕсене пĕтерсе тăкрĕ. Анчах вăрçăра çĕнтерме çавăн пек çапăçни кăна çителĕклĕ мар. Вăрçăри чи пысăк йывăрлăх çар çине ÿкнине эпир пĕлетпĕр, анчах халлĕхе ăна хăйне палăртма ирĕк паман-ха. Вăрçа тÿрремĕнех хутшăнмасан, унта çĕнтерейрес çуккине эпир ăнланатпăр. Паллах, çĕнĕ фронт уçма çăмăл мар, анчах эпир салтаксем пулса çапла калатпăр: эпир çапăçас тесе çар ретне тăтăмăр. Калăр-ха, турăшăн та, эпир хăçан вăрçăра çапăçăпăр?»

Англи авиацийĕ Сурçĕр Франци çине вĕçсе пырса тапăнни

ЛОНДОН, августăн 23-мĕш. (ТАСС). Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, августăн 22-мĕшĕнче кăнтăрла оккупациленĕ Францири тата Бельгири чылай объектсем çине «Спитфайр» йышши самолетсем аялтан вĕçсе пырса атакăланă. Артиллери позицийĕсем çине, промышленность предприятисем, аэродромсем çине вĕçсе пырса тапăннă.

Дьеппра йывăр артиллерин батарейисене атакăланă. Çав батарейăсенчен сахалăшĕ кăна ĕçлени палăрнă. Дьеппран хĕвеланăç енче çăмăл зенитнăй орудисен батарейи пеме пуçланă, анчах истребительсем ăна пусарса лартнă. Дьеппран хĕвелтухăç енчи йывăр орудисем ĕçлемен пулмалла.

Дьепп районне кайса тапăнни çинчен

НЬЮ-ЙОРК, августăн 21-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн корреспонденчĕ Вашингтонран çапла пĕлтерет: Америкăри çар çыннисем союзниксен рейдне Европăра иккĕмĕш фронт пурнăçа кĕме пултарассине кăтартса паркан çĕнĕ факт вырăнне хурса шутлаççĕ. Корреспондент палăртнă тăрăх, Америка пичечĕ, пĕтĕмпе илсен, союзниксем рейд тунине саламлать, çакă вăл Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе Англин наступлени тăвас хастарлăхĕ ÿссе пынине кăтартса парать, тесе хаклать пичет.

Уилки Совет Союзне тата Çывăхри Хĕвелтухăçне кайса çÿресси çинчен Рузвельт каласа пани

ВАШИНГТОН, августăн 22-мĕш. (ТАСС). Пресс-конференцире Рузвельт çапла каланă: 1940 çулти суйлавсенче Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен президентне суйлама республиканецсен партийĕ кандидата тăратнă Уилки президентăн ятарласа янă представителĕ пулса Совет Союзĕпе Çывăхри Хĕвелтухăçне каять. Совет Союзĕсĕр пуçне, Уилки Турцие, Египета, Аравие, Палестинăна, Сирие, Ирака тата Ирана çитет. Малалла Рузвельт çакна кăтартса панă: Уилки Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсене Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем вăрçă енĕпе пĕрлешсе тата пур енчен те вăйсене пухса пыни çинчен тĕрĕссине каласа памалла, тенĕ. Уилки пĕлтерни уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăмалла, мĕншĕн тесен вăл сахалтарах йышлисен лидерĕ пулса тăрать. Рузвельт çакна палăртнă: тĕнĕл держависем Çывăхри Хĕвелтухăçĕнче суя сăмахсем нумай сараççĕ, çав сăмахсем тăрăх Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи пурнăçа тĕрĕс ăнланма çук. Тĕнĕл держависем хăйсен пропагандинче Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи забастовкăсене тата ытти йывăрлăхсене питех те ÿстерсе кăтартаççĕ.

Рузвельт çапла каланă: Уилкине пĕрлешÿллĕ çĕршывсем çĕнтерни е тĕнĕл держависем çĕнтерни Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсенче мĕнле улшăнусем тума пултарнине сÿтсе явма хушрăм, тенĕ. Рузвельт шухăшланă тăрăх, нейтральнăй çĕршывсен вăрçă пĕтнĕ хыççăн вĕсемпе мĕн пуласси шута илес пулать. Тĕнĕл держависем çĕнтерсен, нейтральнăй çĕршывсем Германипе Италия пĕтĕмпех контроль туса тăракан пуканелле государствăсем пулса тăрĕç. Пĕрлешÿллĕ çĕршывсем çĕнтерсен, нейтральнăй çĕршывсем хăйсен экономикине тата никама пăхăнманлăхне малашне те сыхласа хăварма май илеççĕ, Атлантика хартин принципĕсен никĕсĕ çинче малалла аталанса пыма пултараççĕ. Тĕнĕл держависем çĕнтерсен е пĕрлешÿллĕ çĕршывсем çĕнтерсен нейтральнăй çĕршывсене мĕн кĕтессине вĕсен ăнланса илес пулать. Юлашкинчен Рузвельт хăй Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем çав шухăшпа халлĕхе Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсен правительствисемпе калаçăвсене уçăмлăнах каласа паман тесе шутлани çинчен каласа панă.

Германипе Италие хирĕç вăрçă пуçласси çинчен Бразили правительстви деклараци кăларнă

ЛОНДОН, августăн 23-мĕш. (ТАСС). Ĕнер Рио-де-Жанейро хулинче Бразили правительствин официальнăй декларацине пичетлесе кăларнă, унта Германипе Италие хирĕç вăрçă пуçласси çинчен каланă.

Шкул ачисене

Çак кунсенче эпĕ пĕр çыру вуларăм. Вăл пионерка Галя Раскатова çырăвĕ. Галя — тăлăх хĕрача. Унăн халĕ амăшĕ те, ашшĕ те çук. Унăн ашшĕ — аслă лейтенант Раскатов пирĕн фронтра, фашистсене хирĕç паттăррăн çапăçса вилчĕ, тăван çĕршывшăн пуçне хучĕ.

Галя çырăвне вуласа тухнă хыççăн, манăн пуçа тĕрлĕ шухăшсем килсе кĕчĕç. Шкул ачисене каласа парас тетĕп вĕсене. Çавăнпа та ĕнтĕ эпĕ çак статьяна çырма шут тытрăм.

* * *

Нимĕç оккупанчĕсене хирĕç пыракан вăрçăра фронтри боецсем, командирсемпе политработниксем кашни кунах, кашни минутăрах хамăр тăван çĕршывăн малашнехи кунĕсене асра тытаççĕ. Вĕсем хăйсен çемьисене, ачи-пăчисене чи ăшă кăмăлпа асăнаççĕ.

Тăван çĕршыв пулмасан, вĕсен çемьи те пулас çук. Нимĕç фашисчĕсем пĕтернĕ пулĕччĕç вĕсене. Çапла вара, эпир хамăр тăван çĕршывăшăн кĕрешетпĕр пулсан, — тăван хулашăн, тăван ялшăн, унта пурăнакан çемьешĕн, тăван [illegible]

Тăван çĕршыв — вăл телей, кĕвел. Унсăрăн пурнăç çук. Тăван çĕршыв — вăл пирĕн чи хаклă анне, пирĕн чĕремĕр, ĕмĕтĕмĕр. Тăван çĕршыв сывă пулсан — эпир те сывă пулăпăр; эпир сывă пулсан — тăван çĕршывшăн малашне те кĕрешĕпĕр.

Шкул ачисем, эсир çамрăкха. Эсир сурхи чечексем çеç-ха. Эсир телейлĕ çĕршывра телейлĕ вăхăтра çуралтăр. Эсир хăвăрăн тăван аттĕр-аннĕрсемпе пĕрле, кайăк чĕпписем пек шĕкĕлтетсе калаçса, хамăр пысăк аннен — тăван çĕршывăн — ыранхи кунĕ татах та телейлĕ, татах та паха пуласси çинчен ĕмĕтленеттĕр. Эпир, сирĕн аслă пиччĕрсем, сире патша самани вăхăтĕнче пулнă хура кунсем çинчен каласа параттăмăр. Эпир сире пулас çутă кунсемшĕн хамăрпа пĕрле кĕрешме, пăшал тытма, тĕл пеме вĕрентеттĕмĕр.

Анчах та пирĕн телее, çутă куна çичĕ ютран килнĕ тăшман туртса илесшĕн. Сĕлен-калта чĕреллĕ, урнă йытă пуçлă вăрă-хурахсем — асар-писер фашистсем иртнĕ çулти июнĕн 22-мĕшĕнче пирĕн çĕршыва ирсĕррĕн тапăннă. [illegible]

— Вĕсем — тет юн ĕçен Гитлер.—Совет çыннисене çарат, çунтар, вĕлерсе тăк, çамрăк-и е ватă-и вĕсем, — пурĕпĕрех, — вĕлер, вĕлер, вĕлер!..—тесе çухăрать бандит Гитлер. Унпа пĕрлех унăн пĕтĕм урнă шаккалĕсем ÿлеççĕ.

Фашистсем — этем йĕркинчен тухнă çынсем. Çук, тĕрĕсрех калаймарăм: çынсем мар вĕсем! Вĕсене çынсем теме пирĕн халăмăр çитмест. Темле усал çыннăн та кăшт та пулин этем сăнарĕ пурах. Анчах та фашистсем этем сăнсăнатне тахçанах çухатнă. Вĕсем—намăслăхпа витĕннĕ кĕççе питсем, наркăмăшлă юнпа тулнă чĕресем. Тĕрĕсрех каласан: вĕсен пичĕ — выçă кашкăр пичĕ, чĕри — çĕлен çăмхи, алли-ури — вилĕм çави. Пĕтĕмĕшпе илсен, фашист —вăл автомат, чунсăр, чĕмсĕр, кăмăлсăр, ĕмĕтсĕр тискер кайăк. Унăн пĕртен-пĕр шухăш пур: — ах, çаратасчĕ, ах, вĕлересчĕ, ах çунтарасчĕ!... — тенĕ çăткăнла шухăш.

Фашистсем пирĕн мирлĕ çынсене пере-пере вĕлереççĕ, вутта пăрахса çунтараççĕ. Ним айăпсăр çынсенех асаплантараççĕ. Акă мĕн тăваççĕ вĕсем: пирĕн çынсен чĕрисене кăларассĕ, çамкисене касассĕ, куçĕсене чиксе шăтараççĕ, çурăм тирĕсене вистессĕ [illegible]

* * *

Шкул ачисем! Çамрăк юлташсем! [illegible]

хăйсен пурнăçне те хĕрхенмеççĕ.

Пирĕн фронтра виçĕ паттăр воин мĕн юлашки тумлам юн пĕтиччен фашистсене хирĕç çапăçрĕç. Çав виçĕ паттăрăн ячĕсем: Иван Герасименко, Александр Красилов, Леонтий Черемнов. Пĕррехинче пирĕн подразделенисенчен пĕри йывăрлăха лекнĕ. Фашистсем вĕçĕмсĕр персе тăнă. Фашистсен пулемечĕсем дзотсенче пулнă. Çав пирĕн виçĕ паттăр, виçĕ коммунист, хаяр çапăçусем вăхăтĕнче тăшманăн дзочĕсем патне чупса пынă та вĕсен амбразурĕсене (пулеметпа пемелли шăтăксене) хăйсен кăкăрĕсемпе хупланă. Çапла вара, тăшманăн пулемечĕсем пеме чарăннă, çав хушăра пирĕн красноармеецсем малалла кайнă, тăшмансене çĕнтернĕ.

Юлашки кунсенче тата пирĕн фронтра автоматчик Цицаркин пĕччен тăхăр фашиста аркатса тăкнă. Араслан пек çапăçнă вăл. Пульăсем пĕтсе çитсен, фашистсене пăшал вуллипе çапа-çапа аркатнă.

Çак паттăрсем пурте пĕр ĕмĕте ăшра тытса кĕрешнĕ. Вăл ĕмĕт—тăван çĕршыва çăлса хăварас ĕмĕт.

— Вилĕм нимĕç оккупанчĕсене!—теççĕ те пирĕн воинсем фашистсене пересе антараççĕ.

Снайпер Изергов пĕччен 200 фашиста персе вĕлернĕ, снайпер Игнат Федоров—107 фашиста вĕлернĕ, унăн ученикĕсем: Анатолий Богдановский—83, Фейгин—50 фашиста вĕлернĕ.

[illegible]

рĕ, шкула çÿрекен пионерка Галя, пирĕн боецсем патне çакăн пек çыру çырчĕ:

«Ырă кун пултăр, хаклă боецсем! Сирĕн пата аслă лейтенант Раскатов хĕрĕ—Галя çырать. Тăвансем, манăн аттешĕн фашистсене тавăрăр! Сичĕ ют фашистсем пирĕн çĕршывра вилĕм тупчăр.

Тăван çĕршыв мана, çавăн пекех тата ытти тăлăх ачасене те, манас çуккине, хур тутарас çуккине манăн атте пĕлсе тăнă.

Хаклă боецсем, эпĕ ĕнтĕ пысăк,— март уйăхĕнче эпĕ вунпĕр çул тултартăм. Эпĕ хамăн аттем пекех тăван çĕршыва юрататăп, пур тĕлĕшпе те хамăн аттем пек пулма тăрăшатăп.

Отлично вĕренетĕп. Тата та лайăх вĕренме тăрăшатăп. Аттепе манăн договор пулса: эпĕ отлично çеç вĕренетĕп, тесе сăмах патăм, атте—фашистсене хастарлăн пĕтерсе пыма сăмах пачĕ.

Хаклă боецсем, манăн аттем халĕ ĕнтĕ çук. Çавăнпа та, çав договора сирĕнпе тытса пыма, сирĕнпе ăмăртма шутлатăп, килĕшетĕр-и?

Эпĕ хам мĕнле вĕренсе пыни çинчен сире пĕлтерсех тăрăп. Эсир вара фашистсене [illegible] пионерка Галя Раскатова».

Çамрăк юлташсем! Эпĕ сире [illegible]

1) Галя пек пирĕн те [illegible]

Эсир шансах тăрăр: эпир тăшмана çĕнтеретпĕрех, тĕп тăватпăрах!

2) Çамрăксен пĕчĕкренпех вăрçă ĕçне пĕлмелле. Вĕсен харпăрхăй кĕлеткине çамрăкранах Суворов пек пиçĕхтермелле. Çилте те, çăмăрта та хăраса тămалла мар. Хĕлле пулсан, йĕлтĕр çине тăмалла та çил пек вĕçмелле.

«Сывă кĕлеткере—сывă шухăш», тенине манмалла мар.

3) Килте аннĕрсене, аппăрсене ĕçре пулăшăр. Колхозра, кил-картара путексурăхсене пăхăр, чăх-чĕпсене тăрантарăр. Каçсерен ватă-вĕтĕсене кĕнекесем вуласа парăр. Вăрçă çинчен, халăх паттăрĕсем çинчен вулăр. Кашнин кăмăлне çĕклĕр. Çамрăк сасăпа, çамрăк вăйпа çынсен чĕрисенче çĕнĕ хĕм çиçтерĕр. Юрăсем юрлăр, юмахсем ярăр.

4) Пиччĕрсем патне, аçусем патне çырусем çырăр. Çамрăк инкесене упăшкисен çырăвĕсене вуласа парăр, çыру çырма пулăшăр. Ялти, хулари ырă хыпарсем вĕсем патне çитчĕр. Çыру вĕçне хăвăр ятăрсене лартса фронта салам ярăр. Сирĕн ятăрсене курсан, кашни боец, кашни командир:

— Вăт ку ачаран çын пулать!—тетĕр, тăшмансене çĕнтерсе вăрçăран килсен, сире куса-кусăн курса тав тутăр. [illegible]

«Сывă пулăр! [illegible] Сывă пултăр [illegible] Сталин!»

Политрук В. ДОЛГОВ.
ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—47, редакци секретарĕн — 4—26, пропаганда пайĕн — 3—39, хыпарсен пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НГ 911